**Савнӑ тусӑма**

Ҫутӑ кӗмӗл сывлӑм
Укнӗ таврана.
Ирхи уҫӑ сывлӑш
Ачашлать чуна.

Вӑштӑр кӑна вӑштӑр
Ӑшӑ ҫил вӗрет,
Тусӑм евӗр вӑрттӑн
Чуптуса илет.

Сад пахчи пит капӑр,
Ларнӑ чечеке.
Юрлать тапхӑр-тапхӑр
Унта сар пике.

Манӑн шухӑш-кӑмӑл
Унпала ялан.
Ӗҫлеме те ҫӑмӑл
Чун савни пулсан.

Пурнӑҫӑмӑр селӗм —
Ешӗл ҫуркунне.
Юрлар,
    сар пикеҫӗм,
Савар пӗр-пӗрне.

Ҫутӑ кӗмӗл сывлӑм
Укнӗ таврана.
Эп сунатӑп ырлӑх,
Тусӑмҫӑм, сана.

*Давыдов-Анатри, В. Савнӑ тусӑма / В. Давыдов-Анатри // Чӑваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 257.*